Анатолий Тимофеев

**Эх, чăваш çĕршывĕ!**

Шурăмпуç çилхиллĕ хĕрлĕ ут,
Атăл урлă ухăнса эс ут.
Эх, Чăваш çĕршывĕ – юмахри çĕршыв,
Шăпчăк ыйăхиллĕ ман тăван çĕршыв!

Автансем автаççĕ шар та шар,
Куккукпа саркайăк – юнашар.
Эх, Чăваш çĕршывĕ – юрăри çĕршыв,
Юхтăр юрă, юхтăр. Юхтăр юханшыв!

Йăл кулать те йăлăмри юман,
Куçне уçрĕ – вăранать вăрман.
Эх, Чăваш çĕршывĕ – вăрманти çĕршыв,
Мухтанмалăх санăн мĕн кăна çук-ши?!

Уй-хир çийĕн вăй вылять ăрша –
Сарă кун лăпкасшăн ыраша.
Эх, Чăваш çĕршывĕ – пуянах çĕршыв,
Кĕрекӳ сан тулăх – çĕнĕ çăкăр хыв.

Ял ĕçченĕ сулчĕ çавине,
Хулари хускатрĕ станокне.
Эх, Чăваш çĕршывĕ – чи ĕçчен çĕршыв,
Хĕрӳсем илемлĕ, каччусем те сыв!
Ачасем сикеççĕ сăпкара,
Ватăсем сĕреççĕ çĕн сăра.
Пух, Чăваш çĕршывĕ, çитмĕл çич хăна,
Çитмĕл çич тусу сан килтĕр уявна!

*Тимофеев, А. Эх, чăваш çĕршывĕ! / А. Тимофеев // Тăван Атăл. – 1981. – № 6. – С. 5.*